ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ ОРГАНЕСЕНЕ ПАТШАЛĂХĂН УЙРĂМ ПОЛНОМОЧИЙЕСЕНЕ ПАРАССИ ÇИНЧЕН" САККУНЕН 14[6] СТАТЙИНЕ УЛШĂНУСЕМ КЕРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи юпа уйăхĕн 8-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене патшалăхăн уйрăм полномочийĕсене парасси çинчен" 2006 çулхи чӳк уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 55 №-лĕ саккунĕн (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2006, 72 №; 2007, 73, 74 №-сем; 2008, 76 №; 2009, 80, 82 №-сем; 2010, 84, 85 №-сем; 2011, 90, 91 №-сем; 2012, 92 (I том), 94 №-сем; "Республика" хаçат, 2012, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 5, 6, 12 №-сем; 2014, 5, 6, 11 №-сем; 2015, 12 №; 2016, 10, 12 №-сем; 2017, 3, 7 №-сем; "Республика" хаçат, 2017, чӳк уйăхĕн 8-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 13-мĕшĕ; 2018, çу уйăхĕн 8-мĕшĕ, çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 19-мĕшĕ; 2019, пуш уйăхĕн 6-мĕшĕ, пуш уйăхĕн 13-мĕшĕ, çу уйăхĕн 15-мĕшĕ, утă уйăхĕн 17-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2020, ака уйăхĕн 29-мĕшĕ, çу уйăхĕн 13-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 30-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2021, ака уйăхĕн 30-мĕшĕ, çу уйăхĕн 26-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; 2022, ака уйăхĕн 6-мĕшĕ, çу уйăхĕн 5-мĕшĕ, утă уйăхĕн 13-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 28-мĕ-

шĕ, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2022, чӳк уйăхĕн 21-мĕшĕ, 0000000000000244 №; "Республика" хаçат, 2022, раштав уйăхĕн 22-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2023, нарăс уйăхĕн 16-мĕшĕ, 0000000000000736 №, нарăс уйăхĕн 22-мĕшĕ, 0000000000000760 №; "Республика" хаçат, 2023, утă уйăхĕн 19-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 4-мĕшĕ, чӳк уйăхĕн 29-мĕшĕ; 2024, нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕ) 14^6 статйине улшăнусем кĕртес, унта çакăн пек çырса 3-мĕш тата 4-мĕш пайсем хушса хурас:

"3. Ĕçлев хутшăнăвĕсен сферинче вăй хуракан служащисен шутне ($К_{сл}$) çакна шута илсе палăртаççĕ:

пурне те тивĕçлĕ социаллă страхлав тăрăх страхланă ĕçлекен çынсен шучĕн кăтартăвĕн вăтам виçи ($С_{взгi}$) (малалла – ĕçлекен страхланă гражданен шучĕ) 50 процент таран пулнă чухне і-кирек хăш муниципаллă округ (хула округĕ) валли – 0,5 штат единици;

ĕçлекен страхланă гражданен шучĕн кăтартăвĕн вăтам виçи ($С_{взгi}$) 51 процентран пуçласа 100 процент таран пулнă чухне і-кирек хăш муниципаллă округ (хула округĕ) валли – 1,0 штат единици;

ĕçлекен страхланă гражданен шучĕн кăтартăвĕн вăтам виçи ($С_{взгi}$) 101 процентран пуçласа 150 процент таран пулнă чухне і-кирек хăш муниципаллă округ (хула округĕ) валли – 1,5 штат единици;

ĕçлекен страхланă гражданен шучĕн кăтартăвĕн вăтам виçи ($С_{взгi}$) 151 процентран пуçласа 200 процент таран пулнă чухне і-кирек хăш муниципаллă округ (хула округĕ) валли – 2,0 штат единици;

ĕçлекен страхланă гражданен шучĕн кăтартăвĕн вăтам виçи ($С_{взгi}$) 201 процентран пуçласа унтан та ытларах пулнă чухне і-кирек хăш муниципаллă округ (хула округĕ) валли – 2,5 штат единици.

4. Ĕçлекен страхланă гражданен шучĕн і-кирек хăш муниципаллă округри (хула округĕнчи) кăтартăвĕн вăтам виçине ($С_{взгi}$) çак формулăпа палăртаççĕ:

$С_{взгi} = X_i / X_{сред} \times 100$, ăçта:

X_i – і-кирек хăш муниципаллă округри (хула округĕнчи) ĕçлекен страхланă гражданен шучĕ;

$X_{сред}$ – муниципаллă округсенчи (хула округĕсенчи) ĕçлекен страхланă гражданен шучĕн кăтартăвĕн арифметикăллă вăтам виçин Чăваш Республикинчи пĕлтерĕшĕ.

Чăваш Республикин муниципаллă округĕсенче (хула округĕсенче) ĕçлекен страхланă гражданссен шутне Раççей Федерацийĕн Пенси тата социаллă страхлав фончĕн Чăваш Республикинчи – Чăваш Енри уйрăмĕн расчетлă çулталăк умĕнхи çулти даннăйĕсем тăрăх палăртаççĕ.".

2 статья

Çак Саккун 2025 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи юпа уйăхĕн 9-мĕшĕ
54 №